1932 çулхи
июлĕн 27-мĕшĕнче
тухма пуçланă

Шупашкар район хаçачĕ

# ТĂВАН ЕН

137 (9580) № ✵ 2008 çулхи ноябрĕн (чӳк уйăхĕн) 26-мĕшĕ. Юн кун ✵ Хакĕ ирĕклĕ

## ВĂРÇĂ ИНВАЛИЧĔСЕНЕ – АВТОМАШИНĂСЕМ

***Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Шупашкарта, Çĕнĕ Шупашкарта тата Шупашкар районĕнче пурăнакан вăрçă инвалидĕсен пурнăçне пысăк событи кĕрсе юлчĕ.***

Çав кун, ирхи кӳлĕм, тĕп хулари Хĕрлĕ площадьре вĕр-çĕнĕ «Лада» автомашинăсем лартса тухрĕç, пурĕ – 115. Чăваш наци музейĕн конференц-залĕнче ветерансем пухăнчĕç. Вĕсен умĕнче Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В.Федоров сăмах каларĕ:

– Эпĕ, çапăçура йывăр аманнă фронтовик ывăлĕ, Сирĕнпе пĕр залра пулнă чухне хама яланхилле туйма пултараймастăп, м. т. Эсир ытти çынсенчен уйрăлса тăратăр, Эсир этемлĕх историйĕнче пулман вăрçа выляса илнĕ. Йывăр сухатусем тӳссе Тăван çĕршыва, пĕтĕм çĕр чăмăрне хӳтĕлесе хăварнă. Паттăрлăхăршăн çĕре çити тайма пуç! Сирĕн пурнăç урокĕсем, Сирĕн фронтри тата вăрçă хыççăнхи çĕнтерӳсен урокĕсем кашни çĕршыв умнех тухса тăракан йывăр вăхăтсене, проблемăсене çĕнтермелли паха тĕслĕхсем пулса тăраççĕ...

Н.В.Федоров вăрçă инвалидĕсене çирĕп сывлăх, вăрăм ĕмĕр сунчĕ. Кашнин патнех, çав шутра пирĕн районти Алькешри П.Г.Кудряшов (1926 ç.ç.), Ишекри Г.В.Васильев (1923), Явăшри З.Н.Скворцов (1925), пырса автомашина уççисем тыттарчĕ. Вĕсем ЧР Сывлăх сыхлавĕн тата социаллă политика министерствине черете 2005 çулччен тăнă. Çавăн пекех Президентран районти тепĕр 13 вăрçă инвалидĕ валли уçăсем «Раççейри Пенсионерсен союзĕ» общество организацийĕн районти элчи У.И.Иванов илчĕ. Сывлăхĕ начаррипе тĕп хулана çитеймен çак инвалидсем: Кӳкеçри В.А.Александров (1926); Малтикассинчи И.В. Васильев (1923); Хачăкри Е.К.Кузнецова (1923); Хурăнлăхри В.М.Матвеев (1926); Анат Кĕнерти К.Н.Мартьянов (1918); Ярăскассинчи Н.К.Московцев (1926); Кивçурт Маркари Н.А.Толстов (1925); Чакакарти И.П.Силова (1924), Чăрăшкассинчи Н.В.Владимиров (1920); Хурамакассинчи Г.И. Иванов (1921); Мошкассинчи М.И. Иванов (1919); Ишлейри Г.С.Мушлаев (1926); Çĕньялти Т.А.Снежко (1922). Автомашина уççисене вĕсен шаннă çыннисем савăнăçлă лару хыççăн илнĕ. Çак инвалидсене техникăпа тивĕçтерес тĕлĕшпе район халăхне социаллă пулăшу паракан пай та тăрăшнă.

2008 çулта Тăван çĕршывăн аслă вăрçин инвалидĕсене автомашинăпа тивĕçтермелли республика программи туллин пурнăçланать, çулталăк вĕçлениччен черетре юлнисене параççĕ. 2005 çултанпа федераци Чăваш Енри вăрçă инвалидĕсене тивĕçтерме 666 автомашина уйăрнă.

Ю.МИХАЙЛОВ.



*Машинăсем парас умĕн.*

## ТĔПЛĔ ЮСАВ ЫЙТĂВĔПЕ

***Нумай хваттерлĕ çуртсене тĕпрен юсасси епле пынине тишкерпĕ нумаях пулмасть районта иртнĕ канашлура.***

Унта управляющи компанисен, подряд организацийĕсен, ял тăрăхĕсен пуçлăхĕсене, технадзор представителĕсене йыхравланă. Нумай хваттерлĕ çурт-йĕре тĕпрен юсама укçа-тенкĕне тĕрлĕ хыснаран пурĕ 50942,6 пин тенкĕ уйăрнă.

Пирĕн районта 59 çурт юсава тивĕçнĕ. Ĕçсем пынă вăхăтра Тутаркассинчи темиçе хваттерте хамăр та пулнăччĕ. Савăнса пĕтерейместчĕç кил хуçисем. Ара, темиçе çул кĕтнĕ мар-и çавна?..

Юсав валли палăртнă укçа-тенкĕрен ноябрĕн 13-мĕшĕ тĕлне подряд организацийĕсем патне 43 проценчĕ çитнĕ. Юсав ĕçне пĕтĕмпе 90 процент пурнăçланă, 26 çуртра вĕçленĕ.

В.ТИТОВА.

**Инкек**

## ÇИЛ-ТĂВĂЛА ПУЛА

***Вырсарни кас пирĕн районта та çил-тăвăл кĕрлерĕ. Ытлашши пысăк шар кăтартман пулин те, хăш-пĕр çĕрте самай алхаснă вăл.***

Акă, Кӳкеçри Первомайски урамри 9, 11, 13-мĕш çуртсене, «Гавань» лавккана вăл пилĕк сехетлĕхе çутăсăр хăварнă. Унта икĕ çутă юпи тӳнсе кайнă. Анчах «Теплоэнергосети» предприяти вăхăтра юсанă. Райцентр витĕр каякан федераллă çул урлă каçакан электричество пăралукĕсене те çийĕнчех йĕркене кĕртнĕ. Районти хăш-пĕр ял та электричествăсăр вăхăтлăх юлнă, анчах ку тĕслĕхсене те инкеке вăхăтра сирнĕ.

Çатра Хочехмат патĕнчи обществăлла чарăнура тăракан Шупашкарти С.А.Семеновăна вара вăйлă çиле пула тӳнсе кайнă остановка хытах амантнă. «Инкек пирки пирĕн пата хыпар вырсарни кун 17 сехет те 18 минутра çитрĕ», – терĕ чрезвычайлă лару-тăру тата гражданла оборона штабĕн пуçлăхĕ В.М.Орлов. Семенована аяк пĕрчисем хуçăлса пĕтнĕ, ӳпки лапчăннă. Халĕ вăл Шупашкарти пĕр пульницăра выртать.

Янăшри пĕр хуçалăхра йывăç карта йăтăнса аннă.

В.АВЕРКИЕВА.

## АННЕСЕНЕ ХИСЕПЛЕСЕ

Иртнĕ эрне кун Шоркка клубĕнче Аннесен кунне халалласа савăнăçлă уяв иртрĕ. Унта чи малтанах Сарапакасси ял тăрăхĕн пуçлăхĕ Ю.В.Ильин çамрăк ăрăва воспитани парасси, атте-аннене тата ватă çынсене хисеплесси çинчен тухса калаçрĕ. С.А.Толстова культура ĕçченĕ хăйĕн амăшĕн шăпи пирки аса илчĕ, амăшĕсен пĕлтерĕшне уçса пачĕ.

Нумай ача çуратса вĕсене тĕрĕс çул çине кăларнă амăшĕсем Шоркка ялĕнче сахал мар. Акă, М.И.Иванова 8 ача пăхса ӳстернĕ, Л.В.Майорова – 6 ача. З.А.Васильева, Е.В.Александрова, Р.М.Васильева, А.М.Журавлева, А.И.Виноградова – вĕсем кашниех пилĕкшер ача амăшĕ.

Аннесене саламласа вырăнти «Туслăх» фольклор ансамблĕ аннă концерт кăтартрĕ. Сцена çинче юрăташă вĕçленнĕ хыççăн калаçу çавра сĕтел хушшинче малалла тăсăлчĕ.

Н.ПЛАТОНОВ,
район депутачĕ.

**ХИСЕПЛĔ ВУЛАКАНСЕМ!**

**«Тăван ен» хаçата çырăнтарасси малалла пырать, хаксене палăртнă. Хаçата почта уйăмĕсемпе почтальонсем патĕнче çырăнма пулать, вĕсем патĕнче вăл 187,20 тенкĕ тăрать. Альтернативлă майпа, ӳнĕрех – редакцире.**

## 330 ТĔРĔСЛЕВ

Шăпах çавăн чухлĕ тĕрĕслевĕ кăçалхи тăхăр уйăхра Роснедвижимость управленийĕн районти пайĕ çĕр законодательствине епле пăхăннине. Асăннă тапхăрта пĕлтĕр 272 хут тĕрĕслев ирттернĕ. Тупса палăртнă кăлтăксемпе кашнинпех предписани çырнă. 81 протоколран пĕрне миравай пăхса тухса тивĕçлĕ йышăну тунă. Палăртнă кăлтăксем тăрăх 59,3 пин тенкĕлĕх штраф хунă. 330 тĕрĕслеврен 138-шне муниципаллă инспекторсемпе пĕрле ирттернĕ.

В.ЭВЕРККИ.

## ХАÇАТ ТУСĔ - 80-РА

Ноябрĕн 30-мĕшĕнче Хăймалакассинчи Н.Ф.Сазонов 80 çул тултарать. Карчăкĕпе халичченех ĕне усраççĕ. Вăл ку тăрăхра паллă çын: Ишлей райĕçтăвкомĕнче, Янăш ял совечĕн председателĕнче, партком секретарĕнче вăй хунă. Тӳрĕ кăмăлпа нумай çул вăй хунăшăн ăна «Ĕçре палăрнăшăн» медальпе, ытти наградăпа хавхалантарнă. Мăшăрĕ хăйĕнчен 10 çул çамрăкрах, çавăнпа Николай Федотович та çамрăкланма тăрăшать, «Тăван ен» хаçата нумай çул çырăнса илет.

С.СЕРЕГИН.

## КАНАШЛУ ИРТРĔ

Ĕнер район халăхĕн социаллă ыйтăвĕсене тивĕçтерекен центрта ветерансен çурчĕсен заведующийĕсене пухрăмăр. Вĕсемпе Амăшĕн тата Инвалидсен кунĕсене хатĕрленессипе, ветерансен çурчĕсенчи техникăпа ĕç хатĕрĕсен никĕсне çирĕплетессипе çыхăннă ыйтусене сӳтсе яврăмăр, пурнăçламалли ĕçсен планне палăртрăмăр. Çывăх вăхăтрах «Хозяюшки» клуба çӳрекенсем хăйсем пĕçернĕ апат-çимĕçе центрта кăтартĕç. Тунти кун унăн кăнтăрлахи уйрăмне çӳрекен 17 ветеран Шупашкарти «Сеспель» кинотеатра кино курма кайса килчĕ.

Л.АНАНЬЕВА, центр ертӳçи.

## ФИНАЛА ТУХНĂ

Ирĕклĕ майпа кĕрешессипе пирĕн район маттур пулнине республикăра та пĕлеççĕ. Кашнинчех призлă вырăнсене йышăнса пыратпăр.

Нумаях пулмасть пирĕн вĕренекенсем хăйсене тата тепĕр ăмăртура тĕрĕсленĕ. Вăрнарта ЧР Президенчĕн Кубокне çĕнсе илессишĕн шкул ачисем хушшинче зонăри спартакиада иртнĕ. Тутаркассинчи тата Апашри вĕренекенсен пĕрлештернĕ команди хăйсен ушкăнĕнче пĕрремĕш вырăна тухса финала лекнĕ. Вăл декабрь уйăхĕнче иртмелле. Апла пулсан ачасене ăнăçу сунар!

А.СУСМЕТ.

## ÇĂКĂРТАН АСЛИ, СЫВЛĂХРАН ХАКЛИ ÇУК

«Çăкăртан асли, сывлăхран хакли» темăпа Шорккари клубра нумаях пулмасть ял халăхĕпе калаçу ирттернĕ. Унта Л.А.Платонова тата С.А.Толстова культура ĕçченĕсем пĕри сывлăх, тепри çăкăр хакĕ пирки ăнлантарса панă. Залра кукăль-çăмах куравне те йĕркеленĕ. Кăпăшка та тутлă çăкăр пĕçерес вăрттăнлăха Ю.И.Филипповапа В.Н.Виноградова уçса панă. Çатра Хочехматри шкулта 7-мĕш класра вĕренекен К.Евгеньева, М.Богданова тата Н.Егорова пуçтарăннисене илемлĕ юрăсем парнеленĕ. Унтан пурте пĕрле пулса вĕри чейпе тата тутлă апат-çимĕçпе сăйланнă.

Т.ИВЕРИНА.

**Синоптиксем пĕлтернĕ тăрăх**

***Юн кун, ноябрĕн 26-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
юр е çумăр çăвать,
кăнтăрла **+2**
çĕрле **0**

***Эрне кун, ноябрĕн 28-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
юр е çумăр çăвать,
кăнтăрла **+1**
çĕрле **0**

***Кĕçнерни кун, ноябрĕн 27-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
кăштах юр çăвать,
кăнтăрла **0**
çĕрле **-5**

***Шăмат кун, ноябрĕн 29-мĕшĕ***
пĕлĕтлĕ çанталăк,
юр е çумăр çăвать,
кăнтăрла **+1**
çĕрле **+1**

# СПЕЦИАЛИСТ АЛЛА ПĂЧКĂ ТЫТСАН...

***«Бичурин тата паянхи самана» музее хирĕç Бичурин паркĕ çĕкленме пуçларĕ. Çĕре тикĕслесе эрешлĕ тимĕр карта йĕри-тавра тытса тухрĕç. Анчах ку паркпа пĕрлех, паралельлĕ, тата музейпе юнашарти лаптăкра та ĕç вĕресе тăрать. Иртен-каян асăрхарĕ пуль, йывăçран хӳмесем туса хунă та ĕнтĕ. Районта туризма аталантарассипе ĕçлекен специалист Э.К.БАХМИСОВ пĕлтернĕ тăрăх, кунта «Чăваш картишĕ» пулмалла.***

Ӳркенмест Эдуард Константинович, платниксемпе пĕрлех алла пăчкă-пуртă тытать. Кашни кунах вăл кунта. Кану кунĕсенче те платниксемпе пĕрлех ĕçлет. Ара, чăвашсен йăли-йĕркине аталантарма тăрăшать-çке. Чи яваплă ĕçе вăл хăйĕн çине илнĕ – хӳме тăррисене эрешлессине. Вăхăчĕ хĕсĕкрех пулин те, Эдуард Константинович çак çĕнĕ проектпа вулакансене те паллаштарчĕ.

«20 сотка майлă лаптăкра «Чăваш картишĕ» тума палăртатпăр. Чи малтанах йĕри-тавра хӳме тытса тухатпăр. Сивĕсем пуçланиччен тумалли ĕçсем нумай-ха, – пуçларĕ калаçăва Э.К. Бахмисов. – Мĕн пулать-ха унта? «Чăваш картишĕнче» пирĕн мăн асаттесемпе асаннесем тата хальхи чăваш халăхĕ мĕнле пурăннине кăтартма тăрăшăпăр. Чăвашсем мĕн авалтан ĕçе маçтăр пулнă. Пир çапнă, кантăр тылланă, пурте тенĕ пекех çава тутама пĕлнĕ. Çаксене пурне те картишĕнче кăтартăпăр. Халь киле шыв кĕрет. Ачалăха аса илĕр-ха – ĕлĕк пусăран шыв ăснă.

Вырма вăхăтĕнче чăваш киле килсе çӳремен, хӳшĕсем туса унтах сывăрнă. Ăна шĕшкĕрен авса тунă. Тул енчен вара кам хăмăшпа, кам утăпа, кам улăмпа витнĕ. Паллах, картишĕнче çак хӳшĕ те вырăн тупĕ. Ăна эпĕ çав тери пысăк куратăп – пĕр 15 çын кĕмелĕх. Шалтан пир тăрăхĕсемпе карса тухăпăр. Хĕлĕн-çĕвĕн «ĕçлĕ» вăл. Паллах, экспонатсем те кирлĕ пулаççĕ. Атăл тăрăхĕнчи чăвашсен ĕлĕкхи ĕç хатĕрĕсем ялсенче сыхланса юлнах ĕнтĕ. Вĕсене музее килсе пама кăмăл тăвакансем тупăнсан тем пек аван пулмалла.

Экспонатсемпе пуян пулсан тĕрлĕ йăла-йĕркене кунта ирттерме май пулать. Шкула, ача сачĕсене çӳрекенсем хăйсен аллисемпе тунă япаласенчен курав йĕркелеме пултараççĕ кунта. Кĕнекере вулани – пĕрре, куçпа курса хăв алăпа ăсталани асра ытларах юлать. «Чăваш картишĕнче» пысăк тĕн уявĕсене – Питрав, Сăпас, Мăнкун... – кăтартăпăр. Мăн асаттесем вăхăтĕнче туй мĕнле кĕрленĕ! Салтака каякансене мĕнле ăсатнине те кăтартăпăр. Çаксене пурне те тытса пыма тăрăшăпăр».

Курса тĕлĕнмелли нумай пулĕ. Çав вăхăтрах тата хăйне майлă тӳпе айĕнчи уçă музейре туристсене, район çыннисене чăваш апачĕпе те сăйлĕç. Кунта кăмака та тума палăртаççĕ. Чăваш икерчине тата капăртмине активсе пăхакансем унăн тутине темччен туйса пурăнĕç. Шӳрпе техĕмлĕ апат пулнине республикăра тулашĕнче те пĕлеççĕ. Чи интересли – сăра вĕретмелли лаçа та плана кĕртни. Пирĕн района килекен ют çĕршыври хăнасем чăваш сăрине мухтанине пĕрре мар илтнĕ. Малашне вара вĕсене лавккарипе мар, салатпа, чăн чăвашла, килте вĕретнĕ сăрапа сăйлĕç. «Хамăр халăхăн чуна кантаракан ĕçме-çимине вĕретме пĕлекене шырама пуçларăмăр та. Унта аслă ăрури хĕрарăма чĕнĕпĕр. Вăл килти сăрапа сăйланă чухне ăна мĕнлерех йĕркепе хатĕрленине те хăнасене каласа ăнлантарĕ», – пĕлтерчĕ Эдуард Константинович.

Туризма районта аталантарассишĕн ĕçлекен специалист калаçăвĕнчен «Чăваш картишĕ» çав тери пуян пуласси паллă. Эдуард Константинович мĕнле хавхаланса, чунран калаçнине итлесен çапла пĕтĕмлетӳ турăм – çĕкленӳллĕ кăмăлпа алла пăчкă тытса ĕçлекен ку проекта вĕçне çитеретех! Çапла пултăрччĕ.




***Н.Симаковпа Э.Бахмисов хӳме тăррине тĕрĕсемпе илемлетеççĕ.***

А.СУСМЕТ.

# ЯЛ ХАЛĂХĔ СĂНАРЛАННĂ ФОТОСЕН КУРАВĔ

Район администрацийĕн социаллă аталану пайĕ кăçал ял тăрăхĕсем хушшинче ялсен пурнăçне сăнлакан фотографисен конкурсне ирттернĕччĕ. Çакна районта чăвашсен ĕлĕкхи йăли-йĕркине анлăрах сарас тĕллевпе йĕркеленĕ. Конкурса пĕтĕмлетсе Кӳкеçри «Бичурин тата паянхи самана» музейре «Чĕрĕлĕх çиппи» фотосен куравне хатĕрлерĕç. 3 темăна – «Чи хăтлă çурт», «Ял кунĕ», «Сăл куçсем» – çыхăнтаракан курав ноябрĕн 20-мĕшĕнчен музейре ĕçлеме пуçларĕ.

«20х30 сантиметрлă форматпа кăларттарнă фото ӳкерчĕксенче ял пурнăçĕ сăнарланнă. Сăл куçсене мĕнле типтерлĕ тытни, ял уявĕсенче чăваш йăли-йĕркине тытса пыни курăнать ĕçсенче. 17 ял тăрăхĕнчен 6-шĕ çак конкурса активлă хутшăнчĕç. Ишлейсем ĕçсене чи малтан илсе килчĕç. Сарапакассисем тĕллĕн хатĕрленнине палăртмалла. Шемшерсем, Тутаркассисем, Çĕньялсем, Çĕньял-Покровскисем вĕсенчен юласшăн мар», – пĕлтерчĕ музей экскурсоводĕ О.Павлова. Курав декабрĕн 12-мĕшĕччен ĕçлет, кăмăл тăвакансене музей ĕçченĕсем хаваспах йышăнаççĕ.

А.АРДАЛИОНОВА.

# СЕРТИФИКАТЛĂ ПУЛНĂ

Физкультура учителĕсем хушшинче те ăмăрту ирттерме пуçларĕç. Октябрь уйăхĕн вĕçĕнче ачасене спорта юратма, сывă пурнăç йĕркине тытса пыма вĕрентекен 17 педагог республика шайĕнче «Чăваш Енри физкультура учителĕсен профессилĕ ăсталăхĕ» конкурсра тупăшрĕç. Унта пирĕн районтан Кӳкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти В.Г.Андреев кайрĕ. Призлă вырăн мар та, çапах тăван шкула педагог сертификатпа таврăнчĕ. «Пĕрремĕш икерчĕ чусталлă пулать теççĕ. Конкурсăн вăрттăнлăхĕсене пĕлсе çитрĕмĕр, килес çул та районта пĕрремĕш тухсан республикăна урок-шоу хатĕрлесе кайăп», – пĕлтерчĕ Владимир Геннадьевич.

Унччен вăхăт нумай-ха, педагог умĕнче халь кая хăвармалла мар ĕçсем тăраççĕ. Ноябрĕн 29-мĕшĕнче районта физкультурăпа олимпиада иртмелле. Унта Владимир Геннадьевичăн 4 воспитанникĕ хăйĕн пĕлĕвне тĕрĕслĕ.

А.АЛИНИНА.

# ФЕСТИВАЛЬТЕ – ИККĔМĔШ ВЫРĂН

Хаçатăн октябрь уйăхĕн вĕçĕнчи номерĕнче Пенза хулинче иртекен Пĕтĕм Раççейри ялти спортсменсен фестивальне хутшăнма республикăра команда йĕркелени пирки пĕлтернĕччĕ.

Команда йышне кĕртни хăех çитĕнӳ темелле. Кӳкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти В.Андреев педагог воспитаннике, 8-мĕш класа çӳрекен Люба Петрова вара кунпах çырлахман, хăйĕн ушкăнĕнче иккĕмĕш вырăна тухма пултарнă. Маттур! Çитĕнӳпе саламлатпăр сана, Люба.

А.ПОРТНОВА.

# МАНĂÇĂНМАСТЬ САМАНА САЛАМАЧĔ

Эпĕ 1927 çулта Арманкассинче çуралнă, унта 61 килччĕ. Ăна тата 11 яла 1970-мĕш çулсен пуçламăшĕнче хула тума çĕр кирлĕ тесе ярса илчĕç. Яла çĕмĕрме тӳре-шара пĕрремĕш хут 1971 çулхи августăн 28-мĕшĕнче çитрĕ, анчах арçынсем вĕсене хăваласа ячĕç. Вырăсла калаçаканскерсем, аптранипе çаврăнса утрĕç.

Тепĕр кунне яла çĕмĕрме 55 çамрăк тата 2 милиционер янă. Вĕсем урама кĕнине сиссенех хĕрарăмсем килĕсенчен урама тухрĕç, кĕтмен хăнасене вăрçма тытăнчĕç. Лешсем ялаллах сĕкĕнеççĕ, хĕрарăмсем каялла чакмаççĕ, çатăлтатаççĕ кăна – аса илмен вăрçмалли сăмах хăвармарĕç. Тӳре-шара пĕрре те намăсланма пĕлмерĕ, пачах тепĕр майлă: хĕрарăмсене хĕстерсех пычĕ. «Кун пек чаксан пире ялтан та хăваласа кăларĕç, вырăр!» – кăшкăрчĕ такам. Хĕрарăмсем пурте – тусан çине.

Пĕрисен упăшки Аслă вăрçăран таврăнман, теприсен таврăнсан суранĕсене пула вăхăтсăр çĕре кĕнĕ. «Пирĕн стариксен пуçĕсене тăшман çирĕ! – кăшкăрчĕ Çтаппан арăмĕ Хветуççа. – Халь эсир, фашистсем пек, пуçсене касăр пирĕннĕ!..»

Тӳре-шара пирваях нимĕн тума пĕлмесĕр аптраса тăчĕ, унтан пысăк хырăмли: «Пурне те çĕклесе тăратăр! Халех!» – тесе кăшкăрчĕ, лешсем шур аппасене, пĕрин хыççăн теприне, çĕклеме тытăнчĕç, салтак арăмĕсем тăрасшăн мар, тăратсан та – ӳкеççĕ...

Акă милиционерсем пистолечĕсене туртса кăларчĕç те тӳпенелле кĕрĕслеттерме тытăнчĕç, вара тин хĕрарăмсем тарса пытанчĕç. Хул хушшине хулăн папка хĕстерни бульдозериста пӳртсене çырмана тĕксе антарма хушрĕ. Тракторĕ, пит вăйлăскер, сăмсипе çуртсене айккинелле сирпĕнтерсе пычĕ. Çапла пĕр-ик кунтан ман тăван ялтан нимĕн те юлмарĕ.

Эпĕ трактористне: «Турă пул! Пан улмисене те пулин тикĕслесе ан кай, – тесе тархасларăм. – Итлерĕ, тĕкĕнмерĕ. Пурăнмалли çурт тĕлне лекменнипе сыхланса юлчĕç йывăçсем. Халиччен лараççĕ, кашни тĕл пулмассерен çупăрлатăп вĕсене.

Унтанпа кĕçех 40 çул çитет. Çак хушăра ял вырăнне пăхса сахал мар çӳренĕ эпĕ. Пăхса тăратăп та куçран куççуль шăпăртатса анать. Эх, тăван килĕм, ăçта эсĕ? Каçар мана.

Эх, тăван ялăм! Ăçта эсĕ? Каçар ĕнтĕ ачусене сана çак хаяр тĕнчерен упраса хăварайманшăн... Ваттисем, эсир те каçарăр!

12 ял халăхне хваттерсем панă пулсан та çĕнĕ вырăна хăнăхма пĕр çынна та çăмăл пулмарĕ. Уйрăмах хăйсен ĕмĕрне пурăнса ирттернĕ ватă çынсене. Мĕн чухлĕ йĕмен-ши, кулянман-ши? Çакна аса илме халĕ те йывăр. Кайран хваттерсене пурăнма куçнă çемьесем хăйсен килĕсен вырăнĕсене шыраса çӳренине эпĕ темиçе те курнă. Ман ачасем те хăйсем çуралнă çурта манаймасăр нумай пурăнчĕç.

Вăт, çавнашкал пурнăç та чăтса ирттерме тивнĕ пирĕн.




***Евстафий Арсентьевичпа унăн мăшăрĕ Нина Ивановна «Бичурин тата паянхи самана» музейре.***

Е.АРСЕНТЬЕВ.

# «РОССЕЛЬХОЗЦЕНТР» КАНАШЛĂВĔ

Ноябрĕн 20-21-мĕшĕсенче пирĕн районти «Волжанка» санаторипе курорт комплексĕнче «Россельхозцентр» федераллă учреждении регионсенчи филиалĕсен ертӳçисемпе семинар-канашлу иртнĕ. Унта кăçалхи тăхăр уйăхри ĕç-хĕле пĕтĕмлетнĕ.

Канашлăва РФ Ял хуçалăх министерствин департаменчĕн ертӳçи Петр Чекмарев тата, паллах, çӳлерех асăннă учреждении директорĕ Александр Малько килсе çитнĕ. Семинара хутшăнакансен умĕнче сăмах каланă ЧР Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – ял хуçалăх министрĕ Михаил Игнатьев тăван республикăмăр аталанăвĕпе кĕскен паллаштарнă.

Семинарăн иккĕмĕш кунĕнче регионсенчи филиалсен пуçлăхĕсен отчечĕсене тишкернĕ.

В.ТИТОВА.

# АЧАСЕН ПУЛТАРУЛĂХĔ

Олимпиада

## КАНУ КУНĔСЕНЧЕ ПĔЛĔВЕ ТĔРĔСЛЕÇÇĔ

***Нумаях пулмасть Мускавра иртнĕ ларура 2008 çулхи шкул ачисен пĕтĕм Раççейри олимпиади пирки сăмах хускатнă. Унта хальхинче Чăваш Республики пысăк результатпа палăрнине каланă. Чăваш Ен вĕренекенĕсем пурĕ 36 призлă вырăн йышăннă. Кунта Пирĕн район ачисен тӳпи те пур: иртнĕ вĕренӳ çулĕнче икĕ ача Раççейре виççĕмĕш вырăнсене йышăнчĕç.***

Акă, ноябрĕн 15-мĕшĕнчен ачасем каллех тупăшма пуçларĕç – çитес çул январĕн 13-мĕшĕнчен пуçласа февралĕн 6-мĕшĕччен иртекен олимпиадăн республикăри турне камсем тухассине палăртмалла. Вĕсем 21 предметпа хăйсен пĕлĕвĕсене тĕрĕслĕç. Иртнĕ кану кунĕсенче вара тӳрехултă предметпа çĕнтерӳçĕсене палăртрĕç. Кăçал çĕнĕлĕх те пур. Шкул ачисен пĕтĕм Раççейри олимпиадин йышăнăвĕпе килĕшӳллĕн тума пултарнă чи нумай балран çуррине те пухайман пĕрремĕш вырăна никама та памаççĕ.

Пĕтĕм çĕршывĕпе кризис пулнă вăхăтра ЭКОНОМИКА малти плана тухать. Çавăнпа та ку предмета лайăх пĕлмелле. Шел, хальхинче икĕ класран та пĕрремĕш вырăна никам та çĕнсе илеймен. *10-мĕш классенчен* Çатра-Хочехматри Н.Никифоровпа Мăналти А.Ходяшова тата *11-мĕш класри* Кăшавăшри П.Садеркинпа Вăрман-Çĕктерти М.Долганова иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене пайланă. ИНФОРМАТИКĂРА та *9-мĕш классенчен* пĕрремĕш вырăна никам та çĕнсе илеймен. Кӳкеçри лицейри А.Рудниковпа 1-мĕш номерлĕ шкулти Т.Исаков ытти призлă вырăнсене йышăннă. *11-мĕш класран* вара çĕнтерӳçĕ пур. Вăл – лицейри В.Попов. Кунтанах Д.Елизаровпа Вăрман-Çĕктерти Н.Григорьева иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене тухнă.

ВЫРĂС ЧĔЛХИ – пуян чĕлхе. Çакна палăртса ку чĕлхепе лайăх каласнине *9-мĕш классенчен* Тренккассинчи О.Захарова кăтартнă, пĕрремĕш вырăна никама та паман. Тутаркассинчи Е.Валиевапа Вăрман-Çĕктерти А.Федотов – иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсенче. *10-мĕш классенчен* лицейри Н.Шумова тата Д.Степанова, Çĕньял-Покровскинчен А.Смирнова, *11-мĕшсенчен* Чăрăшкассинчи Е.Тимофеева, лицейри Г.Окликова, Тренккассинчи Е.Матвеева призлă вырăнсене йышăннă. *9-мĕш классенчен* Тренккассинчи В.Егоров, Чăрăшкассинчи И.Александров, Шăмăшри А.Иванова ПРАВО предметне пĕлнине заданисене лайăх пурнăçланипе кăтартнă. *10-мĕш классенчен* Чăрăшкассинчи Е.Тимофеева вара иккĕмĕш вырăна тухнă. Тутаркассинчи С.Кирилловпа В.Иванов иккĕшĕ те 3-4-мĕш вырăнта пулнă. *11-мĕш классенчен* те çĕнтерӳçĕ тухайман. Çатра-Хочехматри Н.Никифоров – иккĕмĕш, лицейри Т.Маркова – виççĕмĕш.

ОБЖ урокне ачасем юратсах çӳреççĕ. Çавăнпа ку предметпа олимпиадăна хутшăнакансен хисепĕ те нумай пулнă. Апла пулин те *9-мĕш класри* Тутаркассинчи А.Кузьмина, Тăрăнти Н.Степанова тата Чăрăшкассинчи О.Степанова, *10-мĕш класри* 1-мĕш номерлĕ шкулти И.Лаврентьева, Мăналти Э.Ротмановапа Тренккассинчи С.Киданова тата Çĕньялти Е.Виноградована, *11-мĕш класри* Тутаркассинчи И.Якимована, Чăрăшкассинчи М.Васильевана, Çĕньялти Н.Гурьянова малти вырăнсене йышăнма чăрмантарман. Тĕрлĕ ӳсентăран тата чĕр чун çинчен кам лайăх пĕлет? Паллах, БИОЛОГИ предметне кăмăллакан. *9-мĕш классенчен* Çатра-Хочехматри К.Евгеньева киле пĕрремĕш вырăнпа таврăннă. Атайкассинчи А.Анисимовапа кунтанах Л.Попова хăйсен шкулĕсен копилкине ытти призлă вырăнсемпе тултарнă. *10-мĕш классенчен* пур призлă вырăна та лицей ачисем пайланă. Вĕсем – Л.Иванова, Д.Степанова, Н.Шумова. 1*1-мĕш класри* Çатра-Хочехматри А.Кудряшова, лицейри Е.Васильева, кунтанах Е.Шутова хăйсен вĕрентекенĕсене малти вырăнсемпе савăнтарнă.

## ПРЕЗИДЕНТĂН СӲТСЕ ЯВМАЛЛИ ЫЙТУ НУМАЙ

***Пур вĕренекен те хăйне майлă маттур, анчах темле лайăх пулсан та вăл е ку ачана ытларах кăмăллатăн, тĕслĕх вырăнне хуратăн. Вĕренӳре ĕлкĕрсе пыни çеç мар, уроксем хыççăн иртекен мероприятисене те активлă хутшăннипе тыткăнлаççĕ вĕсем. Тутаркассинчи М.Васильевана та вĕсен йышне кĕртмелле.***



**Иртнĕ вĕренӳ çулне М.Васильева пиллĕк паллăсемпе вĕçлерĕ. Çакăншăн ăна Пĕлӳ кунĕнче шкулăн Хисеп хучĕ пачĕç.**

Марина ку шкула пĕрремĕш хут 2006 çулта ура ярса пуснă. Пĕрремĕш хут парта хушшине ларсанах вăл хăйĕн умне тĕллев лартнă – тăрăшса вĕренмелле. Хĕрача хăйĕн сăмахне тытать. «Пĕрремĕш кунранах Марина хăйне лайăх енпе палăртрĕ. Пур предметпа та ĕлкĕрсе пырать вăл. Юрлас, ташлас, вулас, ӳкерес... – ыттисемпе танлаштарсан – унăн пурте çӳллĕ шайра пулса пыраççĕ», – тет ун пирки класс ертӳçи З.А. Павлова.

Маринăна вĕрентекенсем пур ĕçе те вĕçне çитерме тăрăшнипе те юратаççĕ. Ахальтен мар ĕнтĕ ăна чи пысăк тивĕç шаннă. Вăл – класри Президент. Çĕршыв Президенчĕ пек масштаблă ыйтусене сӳтсе явмалла мар пулин те, унăн класĕшĕн пĕлтерĕшлисем çинче чарăнса тăмаллах. Вĕренӳре е ытти енпе пĕрле вĕренекенсене пулăшма тăрăшать. Уроксем хыççăн та ларма-тăма пĕлмест хĕрача. Музыка шкулĕнче те ăна мухтаççĕ.

Ача çитĕнӳ тăвассинче ашшĕпе амăшĕн тӳпи пысăк. Петр Михайловичпа Луиза Владимировна хăйсен хĕрĕн шкулти ĕçĕсемпе интересленсех тăраççĕ. Кирек мĕнле самантра та пулăшма тăрăшнине Марина шăпах хăйĕн юратнă çыннисенчен илнĕ.

## ХУРА ТИНĔС ХĔРРИНЧЕ АВАН

***Тинĕс хĕрринче канса курма пурте тенĕ пекех ĕмĕтленеççĕ. Çӳлте-çӳлте хĕвел хĕртет, кунĕпе шывра чăмпăлтатма пулать. Чăрăшкассинчи шкулта 10-мĕш класра вĕренекен А.Федоровăн ĕмĕчĕ вара çилпе вĕçсе кайман – çулла «Орленокра» пулчĕ вăл.***

Артем сывă пурнăç йĕркине тытса пырать. Район, республика шайĕнчи спорт мероприятийĕсене активлă хутшăнать. Иртнĕ вĕренӳ çулĕнче физкультура предмечĕпе иртнĕ олимпиадăра пĕрремĕш вырăна тухрĕ. Çăмăл атлетикăра пысăк çитĕнӳсем кăтартнăшăн каччăна Хура тинĕс хĕрринче канма тӳлевсĕр путевка панă та. «Ĕмĕтри вырăнсенче пулса куртăм. Ăшă, тăварлă шывра чăмпăлтатма мĕн тери аван. Кирек мĕнле çул çӳреврe те нумай çынпа паллашатăн. «Орленокра» эпĕ те юлташсем тупрăм», – терĕ Артем. Ĕпхӳ, Мускав, Ростов... – çĕршывăн тĕрлĕ кĕтесĕнчи тантăшĕсемпе паян та çыхăну тытать вăл. «Мĕнле? Хальхи ăру нивушлĕ çыру çырать?» – тесен каччă кĕскен çеç çаплa хуравларĕ: «Интернет вăй-хăвачĕ çакăнта та палăрчĕ».



**Çарпа спорт вăййисенче пĕрремĕш вырăна тухнăшăн пуçлăхсенчен парне илнĕ хыççăн.**

## ĂНĂÇЛĂ РОЛЬ ПУЛЧĔ

Пирĕн район ачисен пултарулăхĕнчен тĕлĕнме пăрахаймастăп. Пĕр-пĕр мероприяти йĕркелесен – спорт е культура енĕпе – активлă хутшăнаççĕ. Чăваш халăхне çутта кăларакан И.Я.Яковлев 160 çул тултарнине халалласа Кӳкеçри культура керменĕнче ирттернĕ уявра çакна тепĕр хут кăтартса пачĕç. «Сан яту сӳнмест» театр представленийĕнче сакăр шкулти вĕренекенсем пулчĕç. Куракансене вара пĕчĕк Ваня рольне калăплакан Кăшавăш шкулĕнчи А.Георгиев уйрăмах килĕшрĕ.




**Тутарпа кĕтӳ кĕтнĕ чухне. Тутар-кĕтӳç (рольне Кăшавăш шкулĕн педагогĕ Е.А.Майков вылять) Ванюша шăпах пушă явма вĕрентет.**

«Шухăшласа калаçать. Аслисем каланине итлет. Сăнĕпе те лăпкă ача пек курăнать. Вăл е ку ĕçе пурнăçланă чухне сăнаса тăрать. Иван Яковлевич пĕчĕк чухне çавăн пек пулнă тетпĕр, çавăнпах Алексее пĕчĕк Ванюш рольне патăмăр. Çутта кăларакана ачалăхне лайăх сăнарларĕ», – терĕ мероприятишĕн яваплă пулнă Кӳкеçри 1-мĕш номерлĕ шкулти педагог Г.Н.Айзов.

## ПУРНЕ ТЕ ЫРĂ СУНАТЬ

***Пуçламăш класра вĕренекенсене тӳпери янкăр та çутă çăлтăрсемпе танлаштарас килет. Вĕсем хăйсен уçă чунĕсемпе пурне те тыткăнлаççĕ. Мĕн чухлĕ асамлăх вĕсенче.***

***Ишек шкулĕн Çатра Маркари филиалĕнче 1-4-мĕш классенче 15 ача ăс пухать. Кашни уйрăм шăпаллăскерсем кунта пĕр çемьери пек туслă пурăнаççĕ. Е.И.Григорьева класс ертӳçи кашни ир ачасене кĕтсе илет. Мĕн чухлĕ асамлăх вĕрентекенре! Кашни ачапа хăйĕн чунне парса калаçать вăл. Юратаççĕ пĕчĕккисем ăс паракана. Екатерина Ивановна вĕсемшĕн – ашшĕ те, амăшĕ те. Иккĕмĕш килти вĕрентекен пурне те ырă сунать.***

***Ачасем тăрăшса вĕренеççĕ, пушă вăхăтра хаçат валли пĕчĕк заметкăсем хатĕрлеççĕ.***

Р.НИКИТИНА,
вĕрентекен.

### ЧĔРĔПЕ АН ТИВĔР!

Пĕринче эпир юлташпа вăрманта пултăмăр. Пăх та – куç умне чĕрĕп пулчĕ. Вăл тăрăшсах çулçă йăтать. Эпир ăна пан улми патăмăр. Пирĕн кучченеçшĕн савăнчĕ пулмалла, ăна та йăтса кайрĕ.

Чĕрĕпсем ăслă чĕр чунсем. Вĕсем сахаллăн, ялсенче курăнсах каймаççĕ. Çавăнпа та вĕсене упрамалла. Ан тивĕр вĕсене, ачасем!

Николай ШКАЛЬКОВ.

### ПИРĔН ШКУЛТА

Иккĕмĕш киле эпир пурĕ 15-ĕн çӳретпĕр. Таса та ăшă шкула чун та туртать. Ачасем пĕр-пĕрне пулăшса пыраççĕ. Учительсем тарăн пĕлӳ пама тăрăшаççĕ. Кăнтăрла пире поварсем тутлă апат çитереççĕ. Хамăр енчен эпир вĕсене лайăх вĕренме тăрăшса тав сăмахĕ калатпăр. Акă, Эдуард Осипов, Димитрий Лукин вĕренӳре ĕлкĕрсе пыраççĕ. Манăн та вĕсем пек лайăх вĕренес килет. Хам ума çак тĕллеве лартатăп та.

Руслан ЛЕОНТЬЕВ.

### ВАТТИСЕНЕ ПУЛĂШМАЛЛА

Шкултан килсенех урок тăватăп. Çырмалли ĕçсене пĕтерсен вулатăп. Вĕренӳрен кăштах канмалла урама ĕçлеме тухатăп. Картара тасатмалла, шыв ăсмалла – май килнĕ таран хамăн асаннене пулăшатăп. Вăл вата пулин те ĕçлеме юратать. Мана та ĕçе вĕрентет вăл. Ватта хисеп тăвакан хăй те хисеп курнă тесе калаççĕ. Çавăнпах хамран килнĕ таран пулăшатăп та. Нумай пурăнмалла пултăр сан, асанне!

Алексей ВАСИЛЬЕВ.

Страницăна А.СУСМЕТОВА хатĕрленĕ.

Спорт

# ЧЕМПИОНСЕН ЧЕМПИОНАЧĔ

***Ноябрĕн пуçламăшĕнче пилĕк спорт мастерĕ тата çичĕ кандидачĕ республикăри чи вăйлă шашист титулĕшĕн кĕрешнĕ. Чăн та, вăйлă йыш пухăннă вырăс шашки енĕпе ирттернĕ Чăваш Республикин чемпионатне.***

Вăрмарти Николай Дмитриев, Етĕрнери Сергей Филенов, Кӳкеçри Михаил Ефимов – вĕсем темиçе хут та Чăваш Ен чемпионĕ пулнă. Тăвайри Алексей Косарев, Шупашкарти Виталий Малов, Олег Михайлов, Юрий Владимиров тата пирĕн районти Çĕнĕ Тутаркассинчи Геннадий Мочалов пĕрер хут çĕнтернĕ. 12 участникран саккăрăшĕ – республика чемпионĕ. Кун пекки нихăçан та пулман. Участниксен йышĕнче вырăс шашкипе çеç мар, халăхсем хушшинчи шашка енĕпе республика чемпионĕ ятне тивĕçнисем: Шупашкарти Владимир Лобышев тата маларах асăннă Николай Дмитриев, Юрий Владимиров, Михаил Ефимов.

Чемпионатра чи çамрăкки маттуртарах пулнă. 11 очко пухма май пурринчен тăхăр çурă очко пухса Юрий Владимиров икĕ хутчен республика чемпионĕ ята тивĕçнĕ. Пирĕн районти Геннадий Мочаловпа Михаил Ефимов турнира 8-шар очкопа вĕçлесе иккĕмĕшпе виççĕмĕш вырăнсене тухнă. Çĕнтерӳçĕсене «Нектар» предприятин гендиректорĕ, Чăваш Республикин шашка федерацийĕн вице-президенчĕ Николай Столяров хаклă парнепе чысланă.

Сăмах май, вĕсем 2006-2007 çулсенче те район чысне хӳтĕлесе чемпион титулне тивĕçме пултарнă. Хальхи вăхăтра вырăс шашкипе Чăрăшкассинчи Римма Васильева 2007 çулхи чемпион шутланать, халăхсем хушшинчи шашкăпа – Кӳкеçри Михаил Ефимов тата Çĕнĕ Тутаракассинчи Геннадий Мочалов (2008 çулпа).

В.ТИТОВА.

## МИЛИЦИ СВОДКИНЧЕН

Ноябрĕн 16-мĕшĕнче икĕ çамрăк «Дружба» предприяти гаражĕнчен Иккасси çыннин «ВАЗ» машининчен сасă кăларакан 6 динамик, 3 фар, 2 канистра, трос вăрланă. Сентябрьте «Атăл» кооперативăн Кайри Ункăпусĕнчиферминчен 3 михĕ фураж пĕçертнĕ. Ноябрĕн 12-мĕшĕнче Ишлейри Совет урамĕнчи Л.Фоминăн 34-мĕш çуртĕнче 50 кг таякан сахăр миххи «ураланнă». Ноябрĕн 22-мĕшĕнче Шанарти А.В. Васильев (1975 ç.ç.) килĕнче пĕр хĕрарăм кил хуçин 5 кĕленче эрехне çывăхнерех хĕстернĕ. Çул пăрлаккипе автоавари çине-çине пулать. Сăмахран, ноябрĕн 21-мĕшĕнче руль тытса пынă Кӳкеçри Б.В.Григорьев кювета чăмнă, хăй больницăна лекнĕ. Ноябрĕн 21-мĕшĕнче Чебоксары-Сурское çул çинче район çынни руль умĕнче ларса пынă автомашина хирĕçле полоса çине тухса кайнă, «УАЗпа» çапăннă, водитель çавăнтах вилнĕ, иккĕшне больницăна леçме тивнĕ.

ШĔП пресс-службы.

Ыйту - хурав

## ЫТЛАРАХ ЛАРТАСЧĔ

***Çĕньял тăрăхĕнчи ялсенчен каяш илсе тухма паян миçе контейнер лартаççĕ-ши? Пирĕн шутпа, шучĕ çителĕксĕр. Ытларах лартарма çук-ши?***

В.СЕМЕНОВА.

Кăçал Çĕньял тăрăхĕнчи ялсенчен каяш турттарса тăма пурĕ 50 контейнер лартатпăр. Çапла, çителĕксĕр, çавăнпа 2009 çулта икĕ хут ытларах – 100 контейнер – лартма палăртатпăр. Каяш кăларма ял администрацийĕ «Чувашское» обществăпа килĕшӳ тунă. Ял çыннисене каллех çакна шута илме ыйтатăп: урамсем тирпейлĕ пуласси сиртен нумай килет.

Е.ЗУБКОВ, ял тăрăхĕн пуçлăхĕ.

## ХЫРĂМПА ЮЛТĂМ

***Ман упăшкана Раççей çарне пĕр çул талăка хĕсметре тăма илсе кайрĕç. Унран йывăрланса юлтăм, кĕçех çурататăп. Çăмăллансан мана мĕнле пособисем параççĕ-ши?***

В.ВАСИЛЬЕВА, Кӳкеç.

2008 çулхи январĕн 1-мĕшĕнчен пуçласа Раççей çарĕпе флотĕнче хĕсметре тăракан çар служащийĕн ача çуратма хатĕрленекен мăшăрне пĕр хутчен паракан пособи 14 пин, ача çуралсан уншăн уйăхне 6 пин тенкĕ параççĕ. Пĕр хутчен паракан пособие тивĕçлĕ пулас тесен йывăр çын пулса 180 кунран сахал мар ирттермелле. Ку çарăн вĕрентӳ заведенийĕсен курсанчĕсен мăшăрĕсене пырса тивмест. Ача çуралнă хыççăн кашни уйăхри пособие ача 3 çул тултариччен, ашшĕн хĕсмет вăхăчĕ пуçланнă уйăхран пуçласа вăл тухиччен кăна параççĕ. Çак ыйтупа тĕплĕнрех район халăхне социаллă пулăшу паракан пая 2-38-95 номерпе шăнкăравламалла.

А.КИРИЛЛОВА, пай специалист-эксперчĕ.

## ПОСОБИСЕМ

***Ман арăм çăмăлланма хатĕрленет. Патшалăх ăна мĕнле пособисем тӳлет-ши?***

В.НИКОНОРОВ.

Йывăр хĕрарăмсене çакăн йышши пособисем туса панă.

Йывăр çын чухнехи тата ача çуратнăшăн паракан пособи, ăна ача çуратиччен 70 куншăн кашни уйăхра 326 тенкĕ параççĕ.

Ача юлсан малтанхи тапхăртах медицина учрежденийĕнче учета тăнă хыççăн пĕрре паракан пособи (331 тенкĕ те 51 пус).

Ача çуралсан пĕрре паракан пособи (8840 тенкĕ те 58 пус).

Врач ыйтнипе йывăр çынна (çие юлнăранпа 12 эрнерен сахал мар пулсан) апат лайăх çиме кашни уйăхра уйăракан компенсаци (100 тенкĕ).

Район халăхне социаллă пулăшу паракан пай.

## Общий список кандидатов в присяжные заседатели для Приволжского окружного военного суда по Чебоксарскому району

1. Алексеев Алексей Валентинович
2. Алексеев Юрий Иванович
3. Андреев Андрей Иванович
4. Андреев Юрий Васильевич
5. Барабаш Владимир Иванович
6. Борнуковская Надежда Николаевна
7. Власихин Владимир Сергеевич
8. Гарашкина Альбина Аверкиевна
9. Григорьев Сергей Николаевич
10. Гурьянов Владислав Борисович
11. Давыдов Сергей Николаевич
12. Долгов Юрий Николаевич
13. Захаров Александр Геннадьевич
14. Иванова Валентина Кирилловна
15. Иванова Зоя Ивановна
16. Иванова Надежда Димитриевна
17. Изыков Дмитрий Борисович
18. Исаева Алевтина Михайловна
19. Козяков Вениамин Ефимович
20. Леонтьев Дмитрий Валерьевич
21. Майорова Людмила Витальевна
22. Матросова Лидия Ильинична
23. Матьянова Динара Александровна
24. Михайлов Бронислав Валентинович
25. Михайлова Надежда Николаевна
26. Модинова Раиса Николаевна
27. Моисеев Анатолий Леонидович
28. Мокин Александр Гаврилович
29. Мушлаева Зинаида Якимовна
30. Мясников Игорь Германович
31. Нестерова Ирина Петровна
32. Нестерова Нина Вениаминовна
33. Николаев Владимир Николаевич
34. Николаев Владислав Гаврилович
35. Орешников Александр Ефремович
36. Орлов Геннадий Владимирович
37. Павлов Борис Васильевич
38. Павлов Олег Викторович
39. Петров Лев Леопольдович
40. Петров Юрий Витальевич
41. Пульков Виталий Егорович
42. Романова Наталья Ивановна
43. Семенов Петр Николаевич
44. Семенова Наталия Николаевна
45. Семенова Нина Александровна
46. Сергеев Валерий Всеволодович
47. Сильвестрова Галина Константиновна
48. Скачков Владимир Александрович
49. Смирнова Ульяна Михайловна
50. Солдатова Эльвира Витальевна
51. Спиридонова Фаина Михайловна
52. Тимофеев Иван Тимофеевич
53. Трофимова Ираида Никифоровна
54. Федорова Людмила Григорьевна
55. Федотов Владимир Вадимович
56. Хрусталева Валентина Николаевна
57. Шалина Светлана Петровна
58. Яковлева Галина Германовна


## ОБЪЯВЛЕНИЯ. ПĔЛТЕРӲСЕМ

☎ 2-13-80

**ВНИМАНИЮ КЛИЕНТОВ**
**СБЕРБАНКА!**

**В связи с проведением технических мероприятий по объединению Новочебоксарского отделения №8102 и Чебоксарского отделения № 4472 (пгт. Кугеси) 28 ноября 2008г. филиалы Чебоксарского отделения №4472 Сбербанка России не работают, за исключением:**
**ОПЕРО (пгт.Кугеси) с 8:00 до 12:00;**
**Филиала №4472/010 (с.Ишлеи) с 8:00 до 12:00.**
**29, 30 ноября 2008 года – не работают.**
**Приносим свои извинения.**

***Администрация банка.***

**ПРОДАЮ керамзитобетонные блоки 20х20х40, цемент. Тел.: 89050284130, 89033462293.**

**Спутниковые ТВ ТРИКОЛОР, ОРИОН-ЭКСПРЕСС. Гарантия, низкие цены от дилера. Тел.: 89033571163, 89279900799.**

**В соответствии** с решением общего собрания собственник земельных долей СХПК «Искра» от 26.01.2006 г. выделяется земельная доля Алексееву Николаю Александровичу общей площадью 5,28 га в поле №9, расположенном рядом с д.Тойдеряки после земельной доли под кадастровым номером 21:21:261602:149. Свои возражения направить по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока аренды земельного участка площадью 0,0989 га с кадастровым номером 21:21:071101:74, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Шанары, ул.Молодежная, д.23 (земли населенных пунктов), для индивидуального жилищного строительства. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** продление на 11 месяцев срока аренды земельного участка площадью 0,03 га с кадастровым номером 21:21:170601:90, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Миснеры, ул.Садовая (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Предполагается** предоставление в собственность (за плату) земельного участка площадью 0,1450 га с кадастровым номером 21:21:170202:123, расположенного по адресу: ЧР, Чебоксарский район, д.Кивсерткасы, ул.Зеленая (земли населенных пунктов), для огородничества. Адрес: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.15, администрация Чебоксарского района. Тел.: 8(83540) 2-15-92.***

**Собственники** земельных долей Григорьев А.А., Григорьев П.А. сообщают о намерении выделиться из землепользования ЗАО «Прогресс» Чебоксарского района ЧР в счет долей каждый по 3,795 га пашни, 0,27 га пастбища и Ефимов В.А.- 2,53 га пашни, 0,18 га пастбища в поле № 9 первого полевого севооборота. Возражения принимаются в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***

**Собственник** земельных долей Грознов Николай Георгиевич сообщает о намерении выделиться из территории землепользования СХПК «Сад» Чебоксарского района ЧР в счет земельных долей 16,24 га пашни в поле № 5 почвозащитного севооборота и в поле №5 кормового севооборота, 1,26 га пастбища рядом с полем №5 почвозащитного севооборота, расположенных севернее д.Василькасы и южнее пруда д.Василькасы. С замечаниями и предложениями по вопросу местоположения обращаться в течение месяца по адресу: ***п.Кугеси, ул.Шоссейная, д.9, территориальный отдел по Чебоксарскому району Управления Роснедвижимости по ЧР.***


✵ ✵ ✵

МУЗ «Чебоксарская центральная районная больница» выражает глубокое соболезнование Михайловой Нине Арсентьевне, медицинской сестре поликлиники МУЗ «Чебоксарская ЦРБ» в связи со смертью мужа

**Николая Васильевича МИХАЙЛОВА.**


ТĂВАН ЕН
(“КРАЙ РОДНОЙ”)
Чебоксарская районная газета

Учредители:
Министерство культуры, по делам национальностей, информационной политики и архивного дела Чувашской Республики,
РГУ “ Редакция Чебоксарской районной газеты “Тăван Ен”,

Газета зарегистрирована в Управлении Федеральной службы по надзору за соблюдением законодательства в сфере массовых коммуникаций и охране культурного наследия по Приволжскому федеральному округу 8 ноября 2005г. ПИ №ФС 18-2477

429500, Чебоксарский район, пос. Кугеси, ул. Шоссейная, 13.

Газета выходит на чувашском языке, с периодической подачей страниц на русском, два раза в неделю - по средам и субботам.

Рукописи не возвращаются и не рецензируются. Опубликованные мнения не всегда совпадают с точкой зрения редакции. За достоверность материалов ответственность несут авторы. За содержание рекламы ответственность несет рекламодатель.

Гл. редактор - 2-12-61, отдел сельского хозяйства, отдел писем ,отдел общественно-политической жизни - 2-21-88, бухгалтерия - 2-13-80, 2-12-59. E-mail: gazeta@chebs.cap.ru. Сайт www.tavan-en.cap.ru.

Номер отпечатан в ГУП «ИПК «Чувашия». Тел.21-00-23.

Гл. редактор В.Т.СОРОКИН

Дежурный по номеру: В.Т.ИВАНОВА.

Печать офсетная. Объем 1,0 печ. лист.
Номер подписан в печать: 25.11.2008 г. в 16 час. 00 мин.
Тираж 2250. Заказ №
Индекс газеты - 54820.